2010 çул – Учитель çулталăкĕ

# «Эсир паян та асрах»

Учитель... Ачан чун-чĕрине кĕрсе вырнаçнăскер, нихăçан та тухмасть вăл унтан. Хамăрăн çулсем хушăнсах пырсан та, юратнă учитель сăнарĕ малтанхи пекех çамрăк та илемлĕ тăрать пирĕн умра. Акă мĕнле аса илет Муркаш шкулĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Л.Г. Кондратьевана паян хăй те шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературинех вĕрентекен Е.Л. Варламова:

– Экскурсине кайсан, пирĕнпе лапталла та вылятчĕ вăл. Эпир унăн кашни утăмне сăнаттăмăр. Чуна йывăр чухне пире вăл анне пек, юлташ пек пулса ырă сĕнӳсем паратчĕ.

Ачасен чун-чĕрине курса, вĕсем патне çул тупма пĕлнĕрен ĕнтĕ юратса аса илеççĕ паян та хăйсен тивĕçлĕ канури вĕрентекенне шкултан вĕренсе тухнисем. Чуманкасси шкулĕнче аслă пионервожатăйра ĕçлеме пуçланăскер, пединститут хыççăн учитель ĕçне те 1967 çулта кунтах пуçлать Людмила Герасимовна. «Аслă учитель», «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ» ятсене хĕйĕн ĕçне чунтан юратса тунипе çĕнсе илет. Вĕрентӳ ĕçĕнче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри съезчĕн делегатне те суйлаççĕ ăна. Кунтан та хаклăрах награда вара уншăн – хăй вĕрентнĕ ачасем паян та ăна ырăпа аса илни, вĕсем унăн çулне суйлани, вĕсен салам çырăвĕсемпе юратнă учителĕ патне килсе çӳрени. Ахальтен мар ĕнтĕ Елена Леонидовна та пĕр иккĕленмесĕрех «Людмила Герасимовна пек» учитель пулма шутлать.

– Воспитани ĕçĕнче литература, уйрăмах классика литератури, çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕччĕ ун чухне. Ачасем урока юратса çӳретчĕç, – аса илет каярахпа Людмила Герасимовна.

Чĕлхепе литература урлă пурнăçа, çынсене юратма, хисеплеме вĕрентнĕ, литературăри геройсемпе ачасен чунчĕрине кĕрсе тухма, унти кашни хĕлĕхе хускатма пĕлекен учительсем сахал мар ĕçленĕ, ĕçлеççĕ те Муркаш шкулĕнче. Пултаруллă филологсем тесенех çĕршер ача асне О.И. Андреева аса килет. Пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлчĕ пулин те, хăй вĕрентнĕ ачасен чĕринче вăл паян та чĕрех.

– Мана анне вырăсла калаçма, çырма кăна мар, аслисене, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентетчĕ. Çавăнпах пулĕ анне çулнех суйласа илтĕм», – тесе аса илет Олимпиада Ивановнан хĕрĕ паян районти вĕрентӳ пайĕнче ĕçлекен Л.Г. Федорова. Тăван ачисене вĕрентĕ пек ют ачасене вĕрентнĕрен, юратнăран ĕнтĕ асра тытаççĕ ăна паян та. Педагогика ĕçне 1951 çулта кӳлĕннĕскерĕн, «Ĕçри паттăрлăхшăн» медаль те пур унăн.

– Муркаш шкулне куçса килсен, мана вăл хăйĕн пĕтĕм методика литературине пачĕ. Çынна ырă сунакан, яланах пулăшма хатĕр çынччĕ вăл», – тет Олимпиада Ивановна пирки унпа пĕрле ĕçленĕ Л.Г. Кондратьева.

Олимпиада Ивановнан лăпкă сасси, ырă куçĕ, ачасене поэзипе проза тĕнчине илсе çӳренĕрен, чĕлхе пуянлăхне курма вĕрентнĕрен пулĕ, паян шкулта ачасене вырăс чĕлхине вĕрентекен О.И. Михайлова та юратнă учителĕн профессинех суйласа илчĕ.

В.Ф. Максимова вĕрентсе кăларнă ачасем паян çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче вăй хураççĕ. 1 çул Çатракасси, 32 çул Муркаш шкулĕнче ĕçленĕскере миçе çĕр ача асра тытмасть пулĕ. Хăйсен юратнă учителĕ çинчен хăйсен ачисене каласа памасть пулĕ. Унччен тепĕр 7 çул Ишлей районĕнче пуçламăш классене те вĕрентнĕ.

Акă ман умра Муркаш шкулĕнче вĕренекен Дмитрий Кузнецовăн сочиненийĕ. Унта вăл хăйĕн амăшĕ паян районти тĕп больницăра реаниматолог-анестезиолог пулса ĕçлекен Г.Н. Кузнецован асилĕвĕсене илсе кăтартать. Валентина Фадеевна ачасене районти паллă çынсем çуралнă вырăнсене, кинотеатрсемпе музейсене, кашни çуркуннекĕркунне вăрмана экскурсие илсе çӳренине паян та астăвать Галина Николаевна.

– Мĕнле кино курасшăн эсир? – ыйтнă пĕррехинче ачасенчен класс ертӳçи.

– Юрату çинчен! – пулнă хурав.

Ун чухне пăхнă «Вам и не снилось» кинона паян та астăваççĕ-ха ун чухнехи ачасем.

Ачасене тарăн пĕлӳ панипе пĕрлех Валентина Фадеевна арçын ачасемпе хĕрачасене туслăха, юратăва упрама, хаклама вĕрентетчĕ.

Муркаш шкулĕнче вĕренсе тухнисенчен кам астумасть пулĕ тата Ю.И. Васильевана? РСФСР халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ, 1954 çулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕн дипломне илнĕскер, тепĕр 10 çултан вырăс чĕлхипе литературин учителĕн дипломĕллĕ те пулса тăрать. Мăшăрĕпе математикăна вĕрентекен Михаил Семеновичпа вĕсем шкулта кăна мар, ялта та ятлă. Ырă кăмăллă, çынпа ăшă кăмăллă Юлия Ивановнапа ĕçчен те тĕрĕслĕхе юратакан мăшăрĕ Михаил Семенович çине пурăннă чухнех тулли кăмăлпа пăхса сăнаттăм. Çак мăшăрта çынран пытарма çук килĕшӳлĕх çиçсе тăратчĕ. Иккĕшĕ те вăрçă тертне-асапне ачаллах тӳснĕскерсем, пĕчĕккĕллех çитĕннисемпе тан вăй хунăскерсем, «1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче паттăрла ĕçсемшĕн» медале тивĕçнĕскерсем, хăйсен ачисене те ĕçе хăнăхтарса ӳстерчĕç, çак юратăва шкулта ытти ачасене ăша хывма хăнăхтарчĕç. Юлия Ивановна патне паян та хăйĕн вĕренекенĕсенчен салам телеграммисем килеççĕ.

Çавăн пекех Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнисем хăйсене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ В.А. Никитинана, В.М. Моисеева та ырă сăмахсемпе аса илеççĕ. Вĕсене хăйсене вĕрентнĕшĕн тав тăваççĕ.

Тивĕш шкулĕн, çавăн пекех Муркаш шкулĕн директорĕнче, районти вĕрентӳ пайĕн инспекторĕнче, заведующийĕнче ĕçленĕ А.Е. Виноградова Муркашра кăна мар, районта та паян ырăпа аса илмен çын çук пулĕ. Муркаш шкулĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕскерĕн интереслĕ урокĕсене паян та астăваççĕ-ха вăл вăхăтри ачасем.

– Çав тери талантлă та пултаруллă учительччĕ вăл. Хăйĕн ĕçĕпе вăл ачасене воспитани парассин пĕлтерĕшне татах та хăпартрĕ, – теççĕ Александр Ефимович пирки паянхи унăн ĕçтешĕсем.

– Унăн урокĕсем пĕри тепринчен интереслĕрехчĕ, – аса илеççĕ вĕренекенĕсем Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учительне. - Ачасене кăсăклантарса яма пултаратчĕ, итленĕçемĕн итлес килетчĕ ăна. Çав тери ăслăччĕ тата вăл, чăн-чăн энциклопедист тейĕн. Пысăк авторитетлă, ачасене чăннипех те юратакан çынччĕ Александр Ефимович.

Çак сăмахсем çумне мĕнех хушса калайăн? Тен çакна. Паян Муркаш шкулĕнче ĕçлекен учительсем те хăйсен наставникĕсем пекех тăрăшса ĕçлеççĕ, ачасене тарăн пĕлӳпе пĕрлех хăйсен юратăвне параççĕ. Çав шутра вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенсем те. Вырăс чĕлхипе литературине вĕретекен Л.А. Волкован вĕренекенĕ республикăри олимпиадăра 2 вырăн, Л.Ю. Краснован тата О.Д. Ефановăн вĕренекенĕсем 5 вырăн йышăнчĕç.

Шкулта та час-часах литература каçĕсем ирттереççĕ. А.П. Чехов юбилейĕ тĕлне те конкурс-викторинăсем, олимпиада иртрĕ. Хăйсен аслă тусĕсем пекех вырăс писателĕсемпе поэчĕсем çуралнă вырăнсене илсе çӳреççĕ паянхи филологсем ачасене. А.С. Пушкин пурăннă вырăнсене кайса çӳрени те ачасемшĕн асра юлчĕ. Муркаш шкулĕнче иртекен пур интереслĕ мероприятисене кунта çырса çитереес те çук.

Муркаш шкулĕ районта авторитетлă шкул пулни те кунта хăй ĕçне пĕлекен учительсем ĕçлени çинченех калать пулĕ. В.В. Ялушкин ертсе пыракан вăтам шкул 2007 çулта Чăваш Республикин Президенчĕн грантне илни те уйрăм вĕрентекенсенчен пуçламăш классене вĕрентекен В.В. Смирнова Чăваш Республикин тата РФ Президенчĕн, кăçал вырăс чĕлхине тата литературине вĕрентекен Е.Н. Ефанова РФ Президенчĕн пултаруллă учительсене паракан хавхалантарăва – 100 пин тенке тивĕçни те çакнах кăтартса парать.

Нумаях пулмасть Шупашкарти вĕрентӳ институчĕ шкул директорĕсемпе республикăри семинара кунта ирттерни те Муркашсен опычĕ ырă тĕслĕх пулни çинченех калать. Владислав Валентинович документсемпе епле ĕçлесе пыни çинчен тухса калаçрĕ çав курссем вăхăтĕнче. Республикăри, çавăн пекех кӳршĕллĕ республикăсенчи шкул директорĕсем Муркаш шкулĕнчи ĕçсемпе паллашса, вĕсенчен нумай çĕннине вĕренчĕç.

Çакăн пек мал ĕмĕтпе пурăнаççĕ Муркаш шкулĕнче вĕрентекенсем, аслă ăрури ĕçтешĕсен ĕçне малалла тăсаççĕ.

**О.МИХАЙЛОВА,**
**А. КРАСНОВА,**
**Муркаш шкулĕнчи вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенсем.**

Редакци почтинчен

# Юбилей кĕрекинче



1925 çулхи февраль уйăхĕн 17-мĕшĕнче Уйкас Хачăк ялĕнчи Ульккапа Хветĕр Шаровсен çемйинче пĕчĕк пепке Анюк çут тĕнчене килет. Çав тери юратса çитĕнтереççĕ Анюка йышлă çемьере. Вăл вăхăтра, паллах, тутă пурнăç курман ял-йыш. Çак çемье те сахал мар выçăллă-тутăллă пурăннă.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă çул Анюк 7 класс пĕтерет. Мăн Сĕнтĕрти шкула 8-мĕш класа çӳреме тытăнатьха хĕрача, анчах та ашшĕпе амăшĕ ватă пулнăран тата пурнăçе йывăрланнăран вăл вĕренме пăрахать. Çав çулхинех çамрăк хĕрача ял халăхĕпе пĕрле Атăл юхан шывĕн тепĕр енне вăрман касма каять. Мĕнле йывăр пулнă пулĕ çитĕнсе çитеймен ачана çĕршер çул ӳсекен вăрманпа кĕрешме! Лашапа та сахал мар вутă турттарма тивет унăн. Хăйсен ялĕнчи Тарье аппа нумай пулăшать Анюка. Йывăç турттарнă хушăрах ытти çамрăксемпе пĕрле хĕр ачана Иваново хулине торф кăларма яраççĕ. Питех те йывăр килет ăна. Тăватă çул хушшинче çурăм çинче миçе карçинкка торф çĕкленĕ-ши? Шутласа та кăлараяс çук, паллах. Сахал мар хура-шурне тӳссе ирттерме тивнĕ.

1945 çулта, вăрçă пĕтсен, Петровски ялĕнчи Васлей отпуска таврăнать. Евчĕ ăна Уйкас Хачăк ялĕнчи Анюкпа паллаштарать. Çав çулах çамрăксем çемье çавăраççĕ. Васлей каллех çара тухса каять. Анюк ватă ашшĕпе амăшне хĕрхенсе урăх Иваново хулине каяс мар тет. Çавăншăн вара ăна тăватă уйăхлăх тĕрмене хупаççĕ. Шăпах çак вăхăтран мăшăрĕ те салтакран таврăнать. Çавăнтанпа шăкăл-шăкăл пурăнса 8 ача пăхса ӳстереççĕ вĕсем.

1961 çулхи апрель вĕçĕнче вĕсен килĕ тĕппипех çунса каять. Ял совечĕ тата ял халăхĕ пулăшнипе тепĕр çул Уйкас Хачăкра çурт лартаççĕ.

41 çул пурăннă хыççăн Васлей ĕмĕрлĕхех уйрăлса каять. Ку пысăк хуйхă хыççăн хуйхи-суйхи Майковсен тĕлне татах та тупăнать: 2 ывăлĕпе 1 хĕрĕ те вăхăтсăр çĕре кĕреççĕ. Çакă Анна Кузьминичнана çапса хуçать. Нумайлăха халран каять вăл. Юрать, ытти ачисем тата ĕç пурри пулăшать ăна.

Çапла вара ĕмĕрĕпех ял хуçалăхĕнче вăй-халне шеллемесĕр тăрăшнă. Сахал мар тав сăмахне тата медальсем илме тивĕçнĕ ĕç ветеранĕ кăçал 85 çула çитрĕ. Анна Кузьминичнан кĕрекине 1 ывăлĕпе 4 хĕрĕ, 4 кĕрӳшĕпе 1 кинĕ, 13 мăнукĕ тата 8 кĕçĕн мăнукĕ пуянлатрĕç. 8-мĕш кĕçĕн мăнукĕ шăпах кăçал февралĕн 17-мĕшĕнче çут тĕнчене килчĕ. Куншăн вара хăнасем те савăнчĕç: Анна аппапа пĕр кун çуралнă-çке пепке!

«Шуçăм» ушкăнăн хĕрĕсем илемлĕ юрă-кĕвĕ шăрантарчĕç хисеплĕ ватă ячĕпе. Вĕсемпе пĕрле кинемей те ташă картине тухрĕ. Çапла ватă çыннăн кăмăлне çĕклеме те пултарчĕç кĕрекере. Мĕн кирлĕ-ха ватă çынна ырă сăмахран ытла? Сывлăхлă пултăр Анна Кузьминична. Кун-çулĕ татах вăрăм пултăр унăн.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

Суд залĕнчен

# Лавккасем «статья сутаççĕ»...

Иртнĕ кĕркунне район территорийĕнче çине-çинех ют пурлăха хапсăнакансем йĕрке хуралçисен канăçлăхне вĕçтерчĕç. Вĕренĕн, темĕн чухлĕ явăнсан та, вĕçĕ пулатех. Халĕ вара... Чавса çывăх та çыртма çук. Çапах 29 çулхи Николай Геннадьевич Павлов та, 22 çулхи Сергей Борисович Осипов та, 24 çулхи Николай Владимирович Токарев та, 24 çулхи Алексей Владимирович Хлашев та, 25 çулхи Роман Борисович Осипов та малашне тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвасса шанатпăр.

Мĕнле аталаннă-ха çак «паттăрсем» саккуна пăсассин çул-йĕрĕ? Следстви уйрăмĕ халĕ çак ыйту çине туллин хурав парайрать. Кунта манăн уйрăмах Осиповсем çинче чарăнса тăрас килет. Муркашра пурăнаканскерсем саккуна пăсассипе питĕ çывăх «туслашнă». Çакна вĕсен суд айăплавĕсем те калаççĕ.

1985 çулта çуралнă Роман Осиповăн судпа айăпланасси 2001 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнче пуçланчĕ. Ют çын харпăрлăхне хапсăннă каччăна çав çулхине Муркаш район сучĕ 2 çуллăха ирĕкрен хăтарчĕ. Çур çултан амнистипе ирĕке тухнăскере 2003 çулхи январĕн 9-мĕшĕнче Чулхула облаçĕнчи Большемурашин район сучĕ çын пурлăхне хапсăннăшăн тата автомашина хăваласа кайнăшăн унчченхи айăплав вăхăчĕ тухманнине шута илсе 3 çулталăк та 6 уйăхлăха ирĕкрен хăтарма приговор кăларнă. Анчах çамрăк тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ туман. Кун хыççăн та вăхăт çитнипе ирĕке тухнă каччă 2008 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче тата мартăн 24-мĕшĕнче суд тенкелĕ çине ларчĕ. Черетлĕ «ходка» – 2009 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче Шарпашри куллен кирлĕ таварсен магазинне çаратнăшăн. Ку хутĕнче унăн решетке хыçĕнче 2 çул ларма тивет.

Романăн шăллĕ Сергей та пиччĕшĕн çулĕнчен инçе кайман. 1988 çулта çуралнăскер, кĕске вăхăтрах тĕрме алăкне темиçе те уçма «хăю» çитерчĕ ĕнтĕ. 2003 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче, 2005 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче, 2005 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче, 2008 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче тата августăн 14-мĕшĕнче вăрланăшăн, ют çыннăн пурăнмалли çуртне кĕнĕшĕн, çынна хĕненĕшĕн саккун ăна çине-çинех суд тенкелĕ çине лартрĕ.

Иртнĕ çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче, октябрĕн 19-мĕшĕнче тата октябрĕн 20-мĕшĕнче С. Осипов А. Хлашевпа, Н. Токаревпа, Ю. Егоровпа çине-çинех çĕрлехи вăхăтпа усă курса магазинсене кĕрсе тухаççĕ. Халĕ вĕсенчен кашниййĕнех тивĕçлипе ответ тытмалла пулать. Çĕрле магазинсенче таварсемпе пĕрлех Уголовнăй Кодекс статйисене те «туянма» пулать çав.

**К. ПЕТРОВ,**
**шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

На военную службу – по контракту

# Служить на благо Отечества

Служба в Вооруженных Силах есть Конституционный долг и почетная обязанность каждого гражданина Российской Федерации.

В 2009 году Министерством обороны Российской Федерации принято решение о переходе Вооруженных сил Российской Федерации на новую организационно-штатную структуру и принцип комплектования. В связи с переходом Вооруженных сил на новый облик в 2009-2012 г.г. проводится сокращение численности Вооруженных сил, в том числе генералов, офицеров и прапорщиков, и увеличение численности сержантов и солдат, проходящих военную службу по контракту, а также будет сокращено количество военно-учебных заведений Министерства обороны Российской Федерации.

В связи с вышеизложенным отдел военного комиссариата Чувашской Республики по Моргаушскому и Аликовскому районам проводит набор кандидатов из числа граждан, пребывающих в запасе на военную службу по контракту. Кандидаты в первую очередь направляются для прохождения военной службы в воинские части, расположенные на территории Приволжско-Уральского военного округа (г. Самара, г. Пермь, г. Оренбург, г. Свердловск, г. Ульяновск) и 201 военной базы на территории Республики Таджикистан.

1. Кандидатами рассматриваются только водители категории не ниже «С», со стажем работы не менее 1 года, годные к военной службе.

2. Денежное содержание в 201 ВБ – до 18000 рублей.

3. Выслуга лет – 1 месяц службы за 3 месяца, что влияет на размер пенсии.

4. Бесплатное трехразовое питание, проживание, обмундирование.

Требования к кандидатам:

- не старше 35 лет;
- наличие водительского удостоверения категории «С»;
- по состоянию здоровья – годные к военной службе;
- не судимые.

Не имеющие водительского удостоверения, отбираются для прохождения военной службы по контракту по воинским специальностям в Северо-Кавказском регионе:

1. н.п. Ботлих, Дагестан, в/ч 22179;
2. ст. Зеленчукская, Карачаево-Черкесская Республика, в/ч 01485;

Денежное содержание в частях СКВО от 15000 рублей. Выслуга лет – 1 месяц за 1,5 месяца.

С 2009 г. в Вооруженных силах Российской Федерации в связи с прекращением деятельности института прапорщиков (школы прапорщиков) вместо подготовки прапорщиков проводится подготовка специалистов для старшин. Набор кандидатов из числа граждан, пребывающих в запасе, на учебу в Рязанский учебный центр (РУЦ) для подготовки специалистов и прохождения военной службы по контракту на должностях сержантов и старшин проводится с 1 марта 2010 года:

- на базе Рязанского автомобильного института по специальностям: командир автомобильного взвода, командир ремонтного взвода, техник по ремонту гусеничной и колесной техники;
- на базе Военно-космической академии г. Санкт-Петербург по специальностям: начальник расчета, начальник смены;
- на базе Военного института физической культуры г. Санкт-Петербург по специальности инструктор по физической подготовке.

Срок обучения – 2 года 6 месяцев.

Бесплатное трехразовое питание, проживание, обмундирование. Стипендия от 8 до 15 тыс. руб. в месяц.

Требования к кандидатам:

- не старше 30 лет;
- уровень образования не ниже среднего (11 классов);
- по состоянию здоровья – годные к военной службе.

По окончании обучения выдается диплом о среднем профессиональном образовании. Окончившие обучение назначаются на воинские должности в соответствии с полученной специальностью.

За справками обращаться в отдел ВК ЧР по Моргаушскому и Аликовскому районам по тел.: 8(835-41)62-3-50; 62-1-89; 62-7-01.

**В. АНДРЕЕВ,**
**начальник отдела ВК ЧР по Моргаушскому и Аликовскому районам.**